Çĕнтеруӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

19 (7659) № ✻ Шăмат кун, 2009 çулхи мартăн (пуш) 7-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Мартăн 8-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ

Ырă кăмăл парнелеççĕ

«Çул пуçламăшĕнче кама тĕл пулатăн – ĕç çапла çаврăнать», – тет чăваш халăх сăнавĕ. «Юг-АвтоВАС» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн Муркаш автовокзалĕнче ĕçлекенсем вара чăнах та çула тухакансемшĕн ырă пуласлăх палли. Çакна кунти услугăсемпе усă куракан кашни пассажирах палăртать. Эсир сăн ӳкерчĕкре малти ретре куракан Алина Георгиевна Васкинова вокзалта амăшĕн – 17 çул аслă кассирта ĕçленĕ Зинаида Александровна Прокопьеван – ĕçне малалла тăсать.

– Кулленех анне пуçарнă ĕçе варалас марччĕ тесе ĕçе кӳлĕнетĕп. Вокзала кашни кун килен-каян 62 рейспа çĕршер çын кăмăллă юлтăр – çакă пирĕн коллективăн ĕç девизĕ. Пассажирсене турттарас ĕçри культура хамăр патăмăртан пуçланнине те кашниех ăнланатпăр, ăна халăха сывăх тăвассишĕн тăрăшатпăр, – терĕ билет илекенсем çук самантра манпа каласма вăхăт тупса Алина Георгиевна кассир.

– Алинăнни пекех манăн та çемье династине хуратас килмест. 20 çул билет кассирĕнче ĕçленĕ анне – Раиса Семеновна Сорокина – маншăн хăйне евĕр тĕслĕх, – терĕ 10-мĕш çул перрон контролерĕнче ĕçлекен Марина Петровна Попова пассажирсем патне тухма хатĕрленнĕ май.

Кашни пассажирпа калаçмах ăшă сăмах тупакан ĕçченсене Хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе саламласа вокзалтан савăк туйăмпа тухрăм. Пĕр-пĕрне хисепленинчен пуçланать вăл халăх хушшинчи культура.

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Эсир пуртан пурнăç илемлĕ

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ çитнĕпе пĕрех. Çут çанталăк хĕрарăма пархатарлă тивĕç парнеленĕ: вĕсем – ача амăшĕсем. Хăйсен тĕпренчĕкĕсене пурнăç çулĕ çине тĕрĕстĕкел тăратассишĕн тимленипе пĕрлех хăйсен ĕç выраннĕнче те чунне парса тăрăшаççĕ. Обществăлла ĕç валли те вăхăт тупаççĕ. Уяв умĕн районти пултарулла хĕрарăмсем çинчен калаçмасăр май та çук. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, районти хĕрарăмсен Канашĕн ертӳçи А.Е. Андреева вара хăйĕн сăмахне акă мĕнрен пуçларĕ.

– Хĕрарăм вăл, чи малтанах – ача амăшĕ. Анне ятне илтме тивĕç пулни кăна мĕн пысăкăш телей хĕрарăмшăн. Хăйĕн тĕпренчĕкĕсене кун-çул парса, вĕсен телейĕшĕн хăйсенчен килнине йăлтах тăваççĕ вĕсем. Пирĕн районта ачаллă çемьесем пĕтĕмпе 4484. Вĕсенче 7385 ача çитĕнет. Пĕтĕм çемьерен нумай ачаллисем – 480. Вĕсенче вара 1555 ывăлпа хĕр çемье ăшшине туйса, туслăх мĕн иккенне пĕлсе ӳсет.

– Амăшĕн тивĕçĕсене пурнăçланипе пĕрлех паян хĕрарăмсем производствăра малта пыраççĕ.

Паян пултарулла хĕрарăмсем сахал мар. Ял хуçалăхнех илер-ха. «Герой» хуçалăхри З.Я. Макарова тӳпи те çителĕклех ĕнтĕ хуçалăх иртнĕ çул тырра кашни гектартан 33,5 центнер, çĕр улмие 228 центнер туса илнинче. Кунти Р.М. Соловьевапа А.Ф. Иванова кашни сурăхран 4,3 килограмм çăм касрĕç, кашни 100 сурăхран 105 путек илчĕç, Н.М. Борисова кашни ĕнерен вăтамран 5499 килограмм сĕт сурĕ. «Ударник» хуçалăхри З.С. Андреева кăтартăвĕ тата та пысăкрах: 5968 килограмм.

«Оринино» хуçалăхри И.В. Блинова агронома та ырăпа палăртса хăварас килет: иртнĕ çул хуçалăхра çĕр улми тухăçĕ 236 центнер пулчĕ. Ку хуçалăхри Р.Е. Горшковапа Н.А. Захарова майракаллă шултра выльăхсене талăкserен 1102 грамм ӳт хуштарма пултарчĕç. Суворов яч. хис. хуçалăхри А.В. Филипповапа Н. З. Гордеева пăхакан ушкăнри сыснасен талăкри вăтам ӳтхушаслăхĕ 581 грампа танлашрĕ. Çавăн пекех çак хуçалăхри Г.В. Васильева зоотехника, Муркашри чăх-чĕп фабрикинчи Э.Е. Соловьева чăхчĕп пăхакана, «Свобода» хуçалăхри А.К. Нодыкова лаша пăхакана, Е.И. Паргеева зоотехника («Герой»), Г.Н. Албутова агронома (Суворов яч. хис.) тата ял хуçалăхĕнче ĕçлекен ытти нумай хĕрарăма ырăпа асăнмалла.

Паян Мăн Сĕнтĕр райпо ертӳçине Л.П. Майкована, «Сундырь–Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăри З.А. Якутовапа С.А. Елумована, «Радуга» кафе заведующине Т.И. Колбасована, Ярапайкассинчи магазин заведующине Т.В. Якушкинана, Муркашри çăкăр пекарнинчи технолога Л.В. Звонкована, Тренккăри магазин заведующине Р.В. Кирпичникована, Л.Ф. Гаврилова аслă повара, Москакассинчи магазин заведующине Л.И. Гаврилована пархатарлă ĕçшĕн тав тăвас килет.

Муркашри кирпĕч заводĕнче предприяти йĕркеленнĕренпех ĕçлекен Г.В. Кондратьева, хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕнчи Л.В. Яндушкинапа И.В. Антонова, çавăн пекех Л.В. Николаева предприниматель, Муркашри линипе техника сыхăну участкинче инженерĕ Т.Н. Пикузова, Ярославкăри тата Çатракассинчи сыхăну уйрăмĕсенчи М.В. Никитинапа А.А. Якимова почтальонкăсем те хăйсен ĕçĕнче пултаруллă.

Маттур педагогсем те сахал мар районта. С.Ф. Желтова (Москакасси), А.Ю. Герасимова (Турай), В.В. Смирнова (Муркаш) Раççей Президенчĕн пулăшăвне 100 пин тенке илме пултарчĕç.

Сывлăх хуралĕнче тата мĕн чухлĕн чирлисене эмелпе çеç мар, çепĕç чĕлхипе сыватакан хĕрарăм-тухтăрсем? Н.А. Лобачева акушер-гинеколога пĕлмен çын çук та пулĕ.

– Вăл палатăна кĕрсен, палата та çуталса каять, – теççĕ Нина Артемьевна пирки пациентсем.

Çавăн пекех М.П. Савельева врач-педиатр, Кашмашри фельдшерпа акушер пункчĕн фельдшерĕ Т.А. Скворцова тата ытти медицина ĕçченĕсем тав сăмахне тивĕç.

Культура ĕçченĕсенчен Р.П. Николаевана (Кашмашри Культура çурчĕн директорĕ), Ф.Ф. Паргеевана (Ярапайкассинчи Культура çурчĕн заведующийĕ), Р.В. Иштонована (Елшикри клуб заведующийĕ), Е.В. Романована (районти историпе краеведени музейĕн директорĕ) тата ыттисене ырăпа асăнмалла.

16 ял тăрăхĕнчен иккĕшĕ – Чуманкассипе Хорнуй ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем – хĕрарăмсем. Л.Г. Ковалевапа В.А. Любимова хăйсен ял тăрăхĕсен инфраструктурине лайăхлатассипе чуна парса ĕçлеççĕ. Кашни отрасльти маттур хĕрарăмсен ячĕсене асăнма темиçе хаçат номерĕ те çитеймĕ.

– Хĕрарăмсем обществăлла ĕçре те хастар.

– Çапла, вĕсем пур çĕре те ĕлкĕреççĕ. Чун ăшшипе тăрăшулăх çемье валли те çитет вĕсен. Ильинка ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашĕн ертӳçине А.Ю. Храмованах илер-ха. Çитĕннисемпе те, ачасемпе те тĕл пулусем, çавра сĕтел хушшинчи калаçусем йĕркелет тата ытти те. Ял тăрăхĕнчи комиссисен ĕçне те хастар хутшăнать. Çавăн пекех С.В. Федорова (Çатракасси ял тăрăхĕ), В.В. Егорова (Юнкă ял тăрăхĕ), Л.А. Иванова (Йӳçкасси ял тăрăхĕ) тата ыттисем тăрăшуллă пулнине палăртмалла.

Пурне те уяв ячĕпе саламлатăп. Çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу, вăрăм кун-çул сунатăп. Телей шевли сăн-питĕртен пĕрре те ан кайтăр. Эсир пуртан пурнăç илемлĕ.

Л.ПАВЛОВА калаçнă.

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ХĔРАРĂМСЕН КУНĔ ЯЧĔПЕ СИРЕ ЧĔРЕРЕН САЛАМЛАТĂП!

Ачашлăхпа юрату, тимлĕхпе ăшă кăмăл, тĕрĕслĕхпе оптимизм туйăмĕсем пĕтĕмпех сирĕнпе çыхăннă, эсир пирĕн тавралăха çутăрах тăватăр.

Ансăртран мар ĕнтĕ хĕрарăмсен çак уявне çурхи малтанхи кунсенче паллă тăваççĕ. Сывлăш тахçантанпах кĕтнĕ асамлăхпа тулать, хĕллехи сивĕ кунсем хыççăн ăшă çитет.

Хаклă аннесемпе асаннесем, мăшăрсемпе хĕрсем, йăмăк-аппасемпе хĕр-юлташсем, эсир юрату, килĕшӳлĕх, илемлĕх парнелетĕр, пирĕн пурнăçа телейпе тата савăнăçпа пуянлататăр, арçынсене паттăр ĕçсем тума хавхалантаратăр. Эпир вара çавна курса сирĕнпе пĕрле анлă задачăсем ума лартатпăр, пысăк проектсене пурнăçа кĕртетпĕр, çĕнĕ чикĕсене çĕнсе илетпĕр. Сирĕн куçăрсенче телей, питре кулă палăрни – пур ĕçшĕн те пысăк тав сăмахĕ калани. Тав сире пулăшушăн, ырă кăмăлшăн тата вĕççĕр чăтăмлăхшăн.

Пĕтĕм кăмăлтан сире çирĕп сывлăх, чун илемлĕхĕ, иксĕлми вăй-хал тата ăнăçу сунатăп! Çемйĕрсенче яланах лăпкăлăх тата çителĕклĕх пулччăр, пуçаруллă ĕç ăнăçу кӳтĕр!

Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. ФЕДОРОВ.

ХИСЕПЛĔ ТЕ ХАКЛĂ ХĔРАРĂМСЕМ!

Сире çывхарса килекен Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Хĕрарăм – пурнăç илемĕ. Çурхи çут çанталăк пек кашни çыннăн пурнăçне уçă варкăш кĕртетĕр. Хăвăрăн чун ăшшипе, çепĕçлĕхĕрпе тĕнчене пуянрах та илемлĕрех тăватăр. Ачăрсене кун-çул парнелесе, мĕн ĕмĕр тăршшĕпех вĕсемшĕн çунатăр, ывăл-хĕрĕрсем чăн-чăн çын пулса ӳсчĕр тесе тăрăшатăр.

Сирĕн ытарайми илемлĕ чун-чĕрĕрте нимпе танлаштарайми çирĕплĕх, çивĕчлĕх тапса тăрать. Аслă Отечественнăй вăрçăра тунă Аслă Çĕнтерӳ те çакна яр уççăн кăтартса парать. Сирĕн умăрта эпир ĕмĕр парăмра, хисеплĕ тыл ĕçченĕсем.

Хĕрарăмсăр, хĕрарăмăн çепĕç алли перĕнмесĕр пурнăçланакан ĕç паян пур-ши тата? Кирек хăш отрасльте вăй хурсан та, ĕçченлĕхпе, пултарулăхпа тата тăрăшулăхпа палăрса тăратăр. Йывăрлăхсене парăнмастăр, вĕсене çĕнтерсех пыратăр. Район аталанăвĕшĕн хăвăртан килнине йăлтах тăватăр. Тавах сире çакăншăн.

Эсир пуртан килте те çутă, ăшă. Çемьене ырлăхпа килĕшӳ, телей, лăпкăлăх кӳретĕр. Çĕр çинче мĕн пур ырри йăлтах сирĕнпе çыхăннă. Эпир çакна яланах асра тытатпăр, сирĕн умăрта пуç таятпăр.

Пĕтĕм чун-чĕререн сире çирĕп сывлăх, ăнăçупа ӳсĕм, телей, шанчăк, ĕненӳ, юрату сунатăп. Сăн-питĕрте йăл кулă çиçтĕр, ĕмĕтĕрсем çитсе пыччăр, шухăшлани пурнăçа кĕтĕр. Çемйĕрте килĕшӳпе ăнлану пултăр, ачăрсен те пурнăç çулĕ уçăлсах пытăр.

Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.

Вĕрентӳ

Пĕрлехи патшалăх экзаменĕсем çывхараççĕ

Февралĕн 21-мĕшĕнче Чăваш Республикин Вĕрентӳ министерствинче «ППЭ – 2009» «хĕрӳ лини» пулса иртрĕ. Шăнкăравлакансен ыйтăвĕсене С. Петрова, В. Матвеев тата М. Федотов министрăн çумĕсем хуравларĕç. Ашшĕ-амăшĕсемпе вĕренекенсенчен çĕр ытла ыйту пулнă. Çак номертен тытăнса сире хăш-пĕр ыйту-хуравсемпе паллаштаратпăр.

Ыйту: Эпĕ 11-мĕш класс пĕтеретĕп. Истори предмечĕпе манăн аттестат çине «4» паллă каять. Эпĕ вара пĕрлехи патшалăх экзаменĕнче «3» илтĕм пулсан, манăн аттестатра мĕнле паллă пулать?

Хурав: Çак лару-тăрура «4» паллă каять те аттестат çине. 2009 çулта экзамента пухнă баллсем пиллĕк баллă виçе çине куçмаççĕ. Апла пулсан аттестатри паллăсем çине те витĕм кӳмеççĕ. Экзаменра «2» илсен те аттестатра «4» пулмалла. Анчах та малалла вĕренме кайма ку, паллах, чăрмантарĕ.

Аттестат çине обязательнăй майпа иртекен икĕ экзаменри баллсем – вырăс чĕлхипе тата математикăпа – витĕм кӳме пултараççĕ. Выпускник çак экзаменсене иккĕшне те тытаймасть е пĕрне тытаймасăр тепĕр хутĕнче те кирлĕ чухлĕ балл пухаймасть пулсан, алла аттестат илеймест. Аттестата ăна тепĕр çулта çав экзамена тытсан çеç параççĕ.

Ыйту: Экзаменсене ăçта тытмалла пулать?

Хурав: Экзаменсен тытмалли база пункчĕсене кăшт каярах министерствăн ятарлă приказĕпе палăртĕç. Шкулсенче кун пирки сире тĕплĕн ăнлантарĕç.

(Малалли çитес номерте.)

Юбилей

Саламлатпăр

Çĕньял Муркашра пурăнакан **Екатерина Афанасьевнапа Рим Васильевич КРОЛИКОВСЕМ** çак кунсенче хăйсен ылтăн туйăне паллă тăваççĕ. 50 çул – паллă çул. Çак тапхăрта хăйсен ĕмĕрĕнче вĕсем тем те тӳссе, чĕрисем витĕр кăларнă пулĕ. Ача-пăча ӳстерсе вĕсене пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнă. Паян та вĕсем хăйсене çирĕп туяççĕ, мăнукĕсене тĕрĕс воспитани пама пулăшаççĕ.

Вăрăм ĕмĕр, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунатпăр сире. Кашни кунпа савăнса, тулли пурнăçпа пурăнăр. Хуйха-суйха, инкек çирĕнтен аякра тăччăр. Эсир пирĕншĕн яланах ырă тĕслĕх пулса тăратăр. Эпир сирĕнпе мухтанатпăр, мăнаçланатпăр, сирĕн пек пулма тăрăшатпăр.

Салампа: 2 ывăлĕ, 3 хĕрĕ, кинĕсемпе кĕрӳшĕсем, тăхлачисемпе хăти, 9 мăнукĕ, çывăх таванĕсем.



Юратнă мăшăра, кăмăллă аттене, кукаçине – Мулкачкасси ялĕнче пурăнакан **Василий Павлович ИВАНОВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем тата йышлă таванĕсем.

Многоуважаемые милые дамы Моргаушского райпо и весь женский коллектив, а также персонально Герой Социалистического Труда Федорова Ольга Федоровна! Сердечно поздравляю вас с первым праздником весны – Международным женским днем 8 марта. Желаю благополучия, любви, счастья.

Искренним поздравлением бывший водитель автоэкспедиционной базы Чувашпотребсоюза и Моргаушского райпо, ветеран труда Чернов Владимир Петрович.

Çырăнтару – 2009

Иккĕмĕш çур çул валли çырăнтараççĕ

Хаклă вулакансем! Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата иккĕмĕш çур çулта илсе тăма унччен хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.

Райхаçат редакцийĕ.